«Илемлĕ чăваш кĕпи, асанне арчинчи, тĕрлеме пĕлсен кăна»

(Чăваш тумĕн уявĕн сценарийĕ)

1-мĕш ертсе пыракан – Назарова Екатерина (10-мĕш класс вĕренекенĕ)

2-мĕш ертсе пыракан – Прохоров Никита (10-мĕш класс вĕренекенĕ)

3-мĕш ертсе пыракан – Васильева Анна (11-мĕш класс вĕренекенĕ)

4-мĕш ертсе пыракан – Васильев Даниил (11-мĕш класс вĕренекенĕ)

Пĕлӳ тĕллевĕ: чăваш халăхĕн авалхи тумĕ хитре те кăткăс пулнине, тум шутне тĕрленĕ эрешсем, капăрланмалли япаласем кĕнине, вĕсем чăннипех те халăх искусствин чи илемлĕ тĕслĕхĕсем пулса тăнине кăтартасси.

Аталану тĕллевĕ: ырă туйăмлă çепĕç сăвă-юрă, ташă-кĕвĕ ытамне кĕртсе ачасен тавра курăмне аталантарасси.

Сапăрлăх тĕллевĕ: тăван халăхăн пурлăх культурипе ăс-хакăл культурине упрас туйăма вăйлатасси, çынлăха ӳстересси.

Илемлĕх тĕллевĕ: сцена çинче харпăр хăйне килĕшӳллĕ тыткалас, юрлас-ташлас ăсталăха, илемлĕ вулава аталантарасси.

Уяв залне илемлетнĕ: чаршавăн икĕ енĕпе çӳлтен аялалла чăваш тĕрриллĕ ал шăлли çакăнса тăрать. Стена çинче – варринче – Чăваш тумĕн уявĕн эмблеми. Сцена варринче сак, сулахай енче пысăках мар арча ларать. Арчине ĕлĕкхи çиттипе витнĕ. Урайне тĕртсе тунă е çыхса ăсталанă кавир сарнă, авалхи хура пӳрте аса илтерсе сĕрĕм янă. Асамлă кĕвĕ янăраса каять. Сцена çине чăвашла тумланнă мăнукĕ тухать, сак çине ларса тĕрлеме пуçлать. Кăштăртатса мăн асламăшĕ килет, мăнукĕпе юнашар пырса ларать.

Мăнукĕ. Мăн асанне, эсĕ тăхăр вунă çулта, питӳ çинче çĕр пĕркеленчĕк, кĕлеткӳ те кукăрăлсах ларнă, çапах та пĕрре те ахаль лармастăн, тек кăштăртатса çӳретĕн. Вăт каласа пар-ха мана: эсĕ ача чухне мĕн ĕçленĕ?

Мăн асламăшĕ. Темĕн те ĕçленĕ, ачам, ĕççĕр ларман. Тумтире пиртен çĕленĕ. Пирне тума нумай вăй хумалла пулнă: акмалла, вырмалла, шыва хутмалла, типĕтмелле, тылламалла, шăртламалла, арламалла, çип тумалла.

Хӗлле пӳрте пир тӗртмелли станок илсе кӗретчӗҫ. Сӳс ҫиппинчен пир тӗртеттӗмӗр, пирӗнчен вара кӗпе-йӗм ҫӗлеттӗмӗр. Хӗр ача чухнех качча кайсан парне памалӑх кӗпе-тумтир хатӗрленӗ. Пур ҫи-пуҫа та тӗрӗпе илемлететтӗмӗр… Тӗрле, тӗрле, мӑнукӑм. Эпӗ хам та мӗн пӗчӗкренех тӗрленӗ. Качча кайнӑ чухне упӑшка тӑванӗсене пурне те тӗрӗллӗ кӗпе тӑхӑнтартрӑм.

Мӑнукӗ. Асаннеҫӗм, эс ӑсталанӑ япалусем ӑҫта упранаҫҫӗ, вӗсене курас килет манӑн.

Мӑн асламӑшӗ. Пирӗн вӑхӑтра пурин те арча е ҫӳпҫе пулнӑ. Унта тумтир, хӗрарӑм капӑрлӑхӗсем, пир тӗркисем упраннӑ.

Мӑнукӗ: Санӑн пур-и ун пек арча?

Мӑн асламӑшӗ: Пур, паллах. (Мӑн асламӑшӗ арча патнелле утса) Акӑ вӑл асамлӑ арча.

Мӑнукӗ: Мӗншӗн асамлӑ вара вӑл?

Мӑн асламӑшӗ: (арчине уҫса) Уҫса кӑтартсан хӑвах тавҫӑрса илӗн, мӑнукӑм. Акӑ кур. (Тӗррисене кӑтартать).

Мӑнукӗ. Асаннеҫӗм, манран сан пек чаплӑ тӗрӗҫ пулаймасть пулӗ.

Мӑн асламӑшӗ. Апла ан шухӑшла, мӑнукӑм-чиперукӑм. Чӑваш тӗррин асамлӑхӗ такам чунне те канӑҫтарма пултарать, хуть те мӗнле куҫа та илӗртет. Мӗн тери паха вӑл! Калӑн, тӗрӗре халӑх чунӗ упранать тесе. Шухӑшласан, ҫакӑн пек тӗрӗсене ҫырма-вулама пӗлмен чӑваш хӗрарӑмӗсем тӗрленине ниепле те ӗненес килмест ӗнтӗ санӑн. Ӗмӗртен ӗмӗре, ӑруран ӑрӑва куҫса пынӑ тӗрӗ тӑвас ӑсталӑх. Эсӗ те Евкен аппу пек маҫтӑр пулӑнха. Чаплӑ тӗрӗ тума чунӗпе пуян, кӑмӑлӗпе ҫепӗҫ, ӑҫ-хакӑлӗпе пысӑк ҫын ҫеҫ пултарать. Ҫакна асра тытсам, ачам.

Мӑн асламӑшӗ тухса каять. Мӑнукӗ арчана уҫса ярать, тӗлӗнсе каять, япалисене тыткаласа пахать. Тантӑшӗсем килсе кӗреҫҫӗ, вӗсем те тӗлӗнеҫҫӗӗ. Ачасем арчари пӗрер япалине илеҫҫӗ те дефиле йӗркелеҫҫӗ. Ҫав хушӑра лӑпкӑ кӗвӗ янӑрать. Сцена ҫинче чӑваш тумӗн дефили. Мӑн

асламăшĕн сасси илтĕнет, çăмрăк ăрăва пил парать. Хăй курăнмасть, сцена хыçĕнче – диктофон çине çырса илме те юрать.

Мăн асламăшĕ. Ачамсем, çакна пĕлсе тăрăр! Чăваш халăхĕн ăс-хакăл пуянлăхĕ иксĕлми. Кашни йăла, кашни уяв хăйĕн асамлăхĕпе, илĕртӳлĕхĕпе, тарăн шухăшĕпе паха. Халăх еткерне ан манăр, ăна май пур таран ытларах пуçтарса ĕмĕртен ĕмĕре çĕклесе пырăр. Хăвăр пĕлни çеç çителĕксĕр, ăна ыттисем патне çитерни, вĕсен ăс-тăнне, чун-чĕрине витерни – сăваплă ĕç пулнине нихăçан та ан манăр.

Хисеплĕ ӳсекен ăру! Аçăр-аннĕр чĕлхине ан манăр. Тăван киле, тăван çĕре, çывăх çынсене ас тутарса тăраканни вăл тăван чĕлхе.

Кашни чăваш хĕрĕ, кашни чăваш каччи тăван халăха хисеплеме пĕлтĕр, унăн сăваплă йăли-йĕркипе мăнаçланса, çепĕç чĕлхипе уççăн калаçма, янăравлă сăвви-юррине çĕкленӳллĕн шăрантарма, тăван çĕр-шывĕпе мухтанма пултартăр, чăн-чăн чăваш чунлĕ пултăр, чăваш ятне ан çĕрттĕр. Çапла пултăр!

(Дефиле хыççăн ачасем майĕпен сцена çинчен каяççĕ. Савăнăçлă кĕвĕпе ертсе пыракансем тухаççĕ. Чăваш тумĕн уявĕн гимне шăрантараççĕ).

1-мĕш ертсе пыракан: Тăван чĕлхе – таса çăл куçĕ,
Тăван чĕлхе – телей шевли.
Тăван чĕлхе çĕн алăк уçĕ
Куллен кунах пире валли.

2-мĕш ертсе пыракан: Тăван чĕлхе – атте ăс-пуçĕ,
Тăван чĕлхе – анне сасси.
Тăван чĕлхесĕр шалкăм хуçĕ,
Тăван чĕлхе вăл – пуласси.

3-мĕш ертсе пыракан: Ырă кун пултăр пурне те: чăваш ачисем, каччисемпе хĕрĕсем, хисеплĕ учительсем, хаклă хăнасем.

4-мĕш ертсе пыракан: Сывлăх сунатăп, туссем!

1-мĕш ертсе пыракан: Паянхи уява Театр çулне, халăхăмăра çутта кăларнă И.Я.Яковлев çуралнăранпа 171 çул çитнине тата çывхарса килекен Чăваш чĕлхи кунне халаллатпăр.

2-мĕш ертсе пыракан: Хаклă тантăшăмсем, ирĕк паратăр-и пире кăçалхипе тваттăмĕш хут иртекен Чăваш тумĕн уявне уçма?

(Залри ачасем ирĕк паратпăр теççĕ)

3-мĕш ертсе пыракан: Халĕ вара кашни класăн хăйĕн девизĕпе паллаштарма, тумне кăтартма, пултарулăх номерĕпе сцена çине тухма вăхăт çитрĕ те.

4-мĕш ертсе пыракан: Чăваш тумĕн уявне йĕркелесе ирттерекенĕ чăваш чĕлхипе литература учителĕ Александрова Наталия Николаевна. Тăвăллăн алă çупса саламлатпăр ăна. Классем мĕнле хутшăннине хаклакан жюри членĕсем: Маркова Наталия Вячеславовна, Абрамова Антонина Артемьевна, Кузюкова Альбина Ивановна, Кузнецова Любовь Павловна, Шмагина Любовь Николаевна. Алă çупса кĕтсе илетпĕр. (Залра ларакансем алă çупаççĕ).

1-мĕш ертсе пыракан: Пахчи, пахчи, çырла пахчи,
Çырла çисе ӳсрĕмĕр.
Эх, ӳсрĕмĕр, çампа çырă пултăмăр.
Катя, эсĕ мĕнле çырла çиме юрататăн? Мана хурлăхан килĕшет.

2-мĕш ертсе пыракан: Эпĕ палан çиме юрататăп.

1-мĕш ертсе пыракан: Палан?! Вăл питĕ йӳçĕ-çке.

2-мĕш ертсе пыракан: Пылак мар пулсан та палан питĕ сиплĕ тата усăллă.
Акă итле: - Пахчи, пахчи, палан пахчи,
Палан çисе ӳсрĕмĕр,
Эх, ӳсрĕмĕр, çампа паллă пултăмăр, - тесе юрлаççĕ халăх юрринче. Çапла вара, манăн та палан çисех паллă çын пулас килет-ха.

3-мĕш ертсе пыракан: Апла пулсан, 1-мĕш класра вĕренекенсем çавăнпа мĕн лайăхрах пулнине ниепле те уйăраймаççĕ пулĕ: «Улми лайăх-и, çырли лайăх-и?»

4-мӗш ертсе пыракан: Кӗтсе илӗр, сцена ҫинче Чӑваш тумӗн уявӗн чи кӗҫӗн «артисчӗсем».

(Ертсе пыракансем кӗрсе каяҫҫӗ. 1-мӗш класс хӑйсен номерӗпе паллаштарать. Классем программӑра кӑтартнӑ йӗркепе сцена ҫине тухма пуҫлаҫҫӗ).

3-мӗш ертсе пыракан: Итле-ха, Анна, мана паян 2-мӗш класра вӗренекен пӗр хӗр ача ҫапла ыйту пачӗ: пӗчӗк ҫеҫ пит-куҫлӑ, эреветлӗ-теветлӗ, мӗн вӑл тет? Эсӗ пӗлместӗн-и хуравне?

4-мӗш ертсе пыракан: Чӑнах та, мӗн вара вӑл? (Зала) Ачасем, эсир пӗлместӗр-и ответне? (Ачасен хуравӗсем: **пукане**). 2-мӗш класра вӗренекенсем паянхи уява хӑйсен чи юратнӑ пуканисемпе килнӗ. Тӑвӑллӑн алӑ ҫупса кӗтсе илер вӗсене.

(Сцена ҫине 2-мӗш класс «Пукане» юрӑпа тухать).

3-мӗш ертсе пыракан: Ирхине ирех утса пыруҫӑн
Саламлатӑп юратса Ҫӗре.
Лӑпкӑ ҫилӗ ҫупӑрларӗ уҫҫӑн
Сывлӑмпа тасалнӑ уй-хире.

4-мӗш ертсе пыракан: Мӗн тери хитре тӑван тавралӑх,
Яланах ҫӗклет ман кӑмӑла.
Пурӑнать кунта мухтавлӑ халӑх,
Ҫӗр ҫинче ӗҫлет юрла-юрла.

«Ирех тӑтӑм та паян…» фольклор номерӗ. Сцена ҫине 3-мӗш класа тухма ыйтатпӑр.

(3-мӗш класс номерӗ)

1-мӗш ертсе пыракан: Тӳпене сар хӗвел хӑпарсан
Эп илтеп ҫамрӑксен юррине.

2-мӗш ертсе пыракан: Вӗсемех те юрлаҫ савӑнса,
Тӑван ҫӗрӗм, сана мухтаса. «Сар хӗвел» юрӑпа сцена ҫине 4-мӗш класс васкать.

(4-мӗш класс номерӗ)

3-мĕш ертсе пыракан 6-мĕш класра вĕренекенсем вăрттăнлăха упрама питĕ тăрăшаççĕ.

4-мĕш ертсе пыракан Паянхи уявра мĕн кăтартса парассине хăйсем çеç пĕлеççĕ. 6-мĕш класа сăмах паратпăр.

(6-мĕш класăн пултарулăх номерĕ).

1-мĕш ертсе пыракан: Савнă ялăм, эсĕ ырă, сывă,
Çуллен-çул пыратăн сарăлса.
Юнашар юхать-çке Кĕтне шывĕ
Шăнкăр-шăнкăр сассине парса.

2-мĕш ертсе пыракан: Яштака ем-ешĕл çамрăк хырлăх
Хăй патне чĕнет пек ачаран.
Мĕн пурри кӳрет телей те ырлăх
Тăван енĕм çывăх пулнăран.

«Тăван яла таврăнсан» юрра 11-мĕш класри яшсемпе хĕрсем шăрантарса парĕç.

(11-мĕш класс юрри)

3-мĕш ертсе пыракан: Атьăр вăййа тухар-и те
Çĕнĕ юрă юрлар-и,
Йĕс шăнкрав пек сасăпа та
Çĕр-шыв ятне мухтар-и?

2-мĕш ертсе пыракан: Атьăр вăййа тухар-и те
Вăй кĕввине калар-и,
Вăйă илемĕпе савăнса та
Ĕçре маттур пулар-и?

Сирĕн умăрта пиллĕкмĕш класра вĕренекенсем. «Атьăр вăййа тухар-и?» фольклор номерĕ.

(5-мĕш класăн фольклор номерĕ. Ертсе пыракансем кĕрсе каяççĕ. Авалхи çи-пуçне хальхи вăхăтра сцена валли çĕлеттернĕ тĕрĕллĕ шурă кĕпесемпе улăштарса тухаççĕ)

3-мӗш ертсе пыракан: Сирӗн умӑрта Даниил Васильев пулчӗ. Вӑл сире «Тӗллевӗм ман» юрра парнелерӗ. Тӑваллӑн алӑ ҫупса тав тӑвар-ха ӑна.

1-мӗш ертсе пыракан: Пирӗн Ҫтаппан мухтанать,

Пуш параппан ҫаптарать.

Тӗрӗссипе, вӗренӳре

Пырать кайра, хӳрере.

2-мӗш ертсе пыракан: Тантӑшӗсем урокра:

Вӑл пур – веҫ – Интернетра.

Каҫ пулсан ҫеҫ чун кӗрет,

Хӗрсем патне вӗҫтерет.

3-мӗш ертсе пыракан: Чипер хӗрсем умӗнче

Вӗҫме хатӗр пӗлӗте.

Ҫунат ҫукки ҫумӗнче

Кансӗрлет-ҫке йӗкӗте.

4-мӗш ертсе пыракан: Эп ятларӑм Ҫтаппана,

Ан каҫӑрттӑр сӑмсине.

Сӑмахпа мар, ӗҫпеле

Ҫунат тупма пӗлмелле.

9-мӗш класс хатӗрленӗ «Пурнӑҫри кулӑшсем» сценкӑсене пӑхма сӗнетпӗр.

(Сценкӑсем, 9-мӗш класс)

3-мӗш ертсе пыракан: Ташӑ пуҫлӑр, ташӑ пуҫлӑр, тантӑшсем,

Юрлӑр савӑк, юрлӑр хӳхӗм юрӑсем.

Мӗнле лайӑх ҫуркунне,

Юхтӑр юрӑ инҫене.

4-мӗш ертсе пыракан: Ҫутӑ ӗмӗт, ҫутӑ ӗмӗт чӗрере,

Ҫиҫтӗр ӗмӗр, ҫиҫтӗр ӗмӗр-ӗмӗре,

Мӗнле лайӑх ҫуркунне,

Юхтӑр юрӑ инҫене.

10-мӗш класс каччисемпе хӗрӗсем юрра-ташша ӑстасем. Кӗтсе илӗр вӗсене!

(10-мĕш класс номерĕ)

1-мĕш ертсе пыракан: Пирĕн ĕçлĕ, пултаруллă халăхра

Çĕр пин юрă, çĕр пин тĕрĕ упранать.

Мĕн пур халăх ирĕк тупнă çĕр-шывра

Сар хĕвеллĕ çутă куншăн тăрăшать.

2-мĕш ертсе пыракан: Хамăр тупнă сенкер çăлтăр тӳпере, -

Пирĕн çирĕп пĕрлĕх пытăр ĕмĕре…

Тăвансемĕр, эпир Улăп йăхĕнчен, -

Çĕнтерӳллĕн, паттăр ут эс, Чăваш ен!

«Тăван çĕр-шыв» юрă янăрать. Сцена çинче саккăрмĕшсем.

(8-мĕш класс юрри)

3-мĕш ертсе пыракан: Ай, юрлар-и юррине

Алла-аллăн тытăнса.

Ай, ташлар-и ташшине

Йăл кулса та ухăнса.

4-мĕш ертсе пыракан: Тăрăшса ĕçленĕ хыççăн

Ташă, юрă вăй парать.

Янăрать хут купăс уççăн

Савăнмашкăн йыхăрать. «Вăрманта, çырлара…» чăваш ташши. Сцена çине 7-мĕш класс ачисем васкаççĕ.

(7-мĕш класс ташши)

1-мĕш ертсе пыракан: Мĕн калар-ши сире, мĕн калар-ши?

Чун-чĕре хушнипе мĕнле юрă пуçлар-ши ?

2-мĕш ертсе пыракан: Чăваш юрри хисепре, ăна усрар чĕрере,

Юрла-юрла савăнар, пĕрне пĕри ыр сунар.

Ачасем, тăвăллăн ал̆ă çупса саламлар-ха сцена çине тухма хавхалантарса юратнă вĕрентекенĕмĕрсене. «Савăнăç юрри».

(Учительсен номерĕ)

1-мĕш ертсе пыракан:

«Кала, юлташ, мĕн хаклă саншăн

Хальхи пуян çак тĕнчере?» -

Тесе ыйтсан, сывламăп ассăн,

Эп калăп пат: тăван чĕлхе!

Чăваш чĕлхи!

2-мĕш ертсе пыракан:

Чăваш чĕлхи – атте чĕлхи!

Чăваш чĕлхи – анне чĕлхи!

3-мĕш ертсе пыракан: Чăвашра вăрман та чăвашла кашлать,

Шăпчăк та юрлать кунта ав чăвашла.

Пин чĕлхеллĕ халăх хушшинче

Калаçса çӳретĕп эпĕ чăвашла!

4-мĕш ертсе пыракан: Ман çĕр-шыв – çĕр пин юрă çĕр-шывĕ,

Калаçать вăл çĕр пин сăмахпа.

Ун çĕр пин тĕррине эс куç хывăн

Чи телейлĕ, таса туйăмпа.

1-мĕш ертсе пыракан: Паян эпир Чăваш тумĕн уявне ирттертĕмĕр. Ачасем, сире паянхи уяв килĕшрĕ-и? Кама килĕшнĕ ура çине тăма ыйтатăп. (Р.Сарпи сăввине калама юрать)

2-мĕш ертсе пыракан: Апла пулсан, чăваш халăхĕн тумĕ çинчен тата лайăхрах пĕлме тăрăшар.

3-мĕш ертсе пыракан: Асаттесемпе асаннесен ырă йăлисене паян та манăçа кăларар мар.

4-мĕш ертсе пыракан: Жюри членĕсем дипломсем пама хатĕрленнĕ вăхăтра «Ас тăватăр-и?» видеоролик пăхма сĕнетпĕр.

1-мĕш ертсе пыракан: Ачасем, жюрие итлеме пурте хатĕр-и? Жюри председательне сăмах паратпăр.

(Ачасем дипломсене тухса илеççĕ).

2-мĕш ертсе пыракан: Хаклă ачасем, хисеплĕ вĕрентекенсем! Çитес çулхи Чăваш тумĕн уявне те паянхинчен кая мар капăрланса килĕр.

3-мӗш ертсе пыракан: Ҫакӑнпа «Чӑваш тумӗн уявӗ – 2019» вӗҫленет. Пурне те пысӑк тав.

4-мӗш ертсе пыракан: Сывӑ пулӑр. (Пӗрле) Тепре тӗл пуличчен!

(«Илемлӗ, илемлӗ» кӗвӗпе ачасем залран тухаҫҫӗ)

Сценарие хатӗрлекенӗ Чӑваш Республикинчи Йӗпреҫ муниципалитет округӗн Хурамал вӑтам шкулӗнче чӑваш чӗлхипе литература вӗрентекен Александрова Наталия Николаевна